# Чăнлăх

КПРФ Чăваш рескомĕн хаçачĕ , № 1 (39) 2021 çулхи чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕ

«Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ

## КПРФ Тĕп Комитечĕн Президиумĕ 2021 çулхи суйлав кампанийĕн кăтартăвĕсем тата парти позицийĕсене çирĕплетессин тĕллевĕсем çинчен III ПЛЕНУМра тунă доклачĕ

**2021 çулхи юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче Мускав облаçĕнче III КПРФ Тĕп Комитечĕн тата Тĕп Тĕрĕслевпе ревизи комиссийĕн пĕрлехи Пленумĕ иртрĕ.**

**Пленум умĕн КПРФ регионсенчи комитетсен ертӳçисен семинарĕпе канашлăвне йĕрклерĕ. Унта Тĕп Комитет председателĕ Г.А. Зюганов 2021 çулхи суйлав кампанине пĕтĕмлетрĕ, суйлав хыççăнхи тапхăрта çĕршыври лару-тăрăва аталантармалли çул-йĕре тишкерчĕ.**

**«Суйлав кампанийĕн пĕтĕмлетĕвĕ тата позицийĕсене çирĕплетессин тĕллевĕсем çинчен» ыйтупа КПРФ Тĕп Комитечĕн председателĕн пĕрремĕш заместителĕ И.И. Мельников тухса калаçрĕ.**

***Хисеплĕ юлташсем!***

Тав туса доклад тума ирĕк парăр. Кашни коммуниста, пирĕнпе пĕр шухăшлă кашни çынна, пĕр сăмахпа каласан, ĕçлекенсемпе кĕрешекенсене пурне те тав тăватăп. Пире халăх интересĕсемпе çĕршыв пуласлăхĕшĕн улшăнма вăхăт çитнине ăнланса илни пĕрлештерчĕ, пĕрлеште-



рет те.

Эпир сирĕнпе пĕрле питĕ йывăр тата пысăк пĕлтерĕшлĕ кампани ирттертĕмĕр. Чылай çул хушшинче пуçласа сулахай повесткăна чăннипех те Пĕтĕм Раççей илтмелле калама пултартăмăр. Обществăн влаç партийĕн монополине чарма пултаракан шанăçĕ пулса тăтăмăр. Хамăрăн оппонентсене тарăхтарма тата хĕрлĕ чикĕ урлă ирттерсе яма пултартăмăр. Моральпе политика çĕнтерĕвĕ пирĕн енче пулчĕ. Шăпах çакăн пек çĕнтерӳсем пысăк çитĕнӳсем патне çул хываççĕ.

Компарти суйлав пуçланиччен чылай малтан кĕрешĕвĕн никĕсне хыврĕ. Чăннипе эпир суйлав умĕн виçĕ пысăк кампани йĕркелерĕмĕр.

**Пĕрремĕш кампани:** 2019 çул вĕçĕнче – 2020 çул пуçламăшĕнче Правительствăна улăштарас енĕпе. Паллах, ăна эпир ирĕксĕрленипе отставкăна яман, çав вăхăтрах пире пула та. Пенси реформи унăн ĕçĕнче юлашки тумлам пулчĕ, КПРФ халăх хирĕçлевне ертсе пычĕ. Эпир Министрсен Кабинечĕн çĕнĕ йышне çирĕплетнĕ чухне те тĕрĕс позици йышăнтăмăр. Оптимизма тата шанăçа мала кăлармарăмăр. Сасăлавра та майлă пулмарăмăр. Юлашкинчен эпир тĕрĕс пулни палăрчĕ.

**Иккĕмĕш кампани:** пандеми сарălнă вăхăтра граждансен прависене хӳтĕлес тĕллĕшпе. Вăл сывлăх сыхлавĕн тытăмне, пĕтĕм социаллă сферăна оптимизациленин тӳнтер енĕсене уççăн кăтартрĕ. Çĕршыв совет медицининчен, аслăлăх шкулĕнчен тăрса юлнă япаласемпе йывăрлăхсене çĕнтерме пултарчĕ.

Шăпах пирĕн парти ирĕксĕрлесе изоляцие ярассине тата вакцинацилессине хирĕç пулчĕ. Дистанци вĕрентĕвне çирĕплетессине йышăнмарĕ. Тĕпрен илсен, граждансене цифра урлă тĕрĕслесе тăрассине хирĕç пулчĕ.

**Виççĕмĕш кампани:** Конституцин çĕнĕ редакцийĕ тĕллĕшпе. Тĕп саккуна улшăнусем кĕртессине ырларăмăр пулин те эпир кăна çак ĕçе мĕнле пурнăçланипе тата мĕн туса хунипе килĕшмерĕмĕр. Халăхăн пысăк йышне пырса тивекен пирĕн 15 тĕп тӳрлетĕве айккине сирсе хăварчĕç. Çĕнĕ редакцин рекламинче çавăртарнă хитре тата тĕрĕс сăмахсем декларацие хăвăрт çавранчĕç. Влаç позицине консервацилекен нормăсем кăна чăннипех те ĕçлекеннисем пулса тăчĕç. Çулталăк иртсен шухăшлама пĕлекен çынсемшĕн çакă тата та ăнланмалларах килсе тухрĕ.

Эпир суйлава кашни ыйтупа çирĕп позици йышăнакан политика вăйĕ пек хутшăнтăмăр. Пирĕн тĕрĕслĕхе каярахпа вăхăт тата та çирĕплетрĕ.

Эпир суйлава комплекслă альтернативлă тулли программа, çавăн пекех çивĕч ыйтусемпе хатĕрленĕ сĕнӳсемпе тата саккун проекчĕсем пур пĕртен-пĕр политика вăйĕ пек кайрăмăр.

Эпир вун-вун общество организацине пĕрлештерекен центр пулса тăтăмăр. КПРФ тавра чăн-чăн сулахай-патриотизм союзне чăмăртарăмăр, унăн йышĕнче «Сулахай фронт» тата «Çĕнĕ социализмшăн» евĕрлĕ паллă организацисем те пулчĕç. Сулахай тата патриотизм пĕрлĕхĕсен представителĕсем хăйсем суйлава хутшăнман, пирĕн блока кĕмен пулин те тĕрлĕ шухăшлăха айккине сирсе хурса ăнлантару ĕçĕнче пулăшрĕç. Çак пулăшу чăннипех те витĕмлĕ пулчĕ.

2016 çулхи парламент кампанийĕпе, юлашки çулсенчи «пĕрлехи сасăлав кунĕсемпе» танлаштарсан хальхинче эпир халăхпа пĕр пулнине туйса тăтăмăр, кашни эрнере икĕ концепци хирĕç-тăрăвĕнчен: хальхи вăхăтра пулакан ĕçхĕл тата эпир сĕнекенни – тухса тăракан кăмăлсăрлăх ӳссех пычĕ. Халăх шухăшлавĕ улшăнма пуçлани сисĕнме тытăнчĕ, унсăрăн эпир маларахри çулсенче вăй хуни усăсăрччĕ. Шăпах çак сăлтавпа суйлавăн официаллă хисепĕсем пирки сăмах пуçличчен унăн шухăш тĕшшине пĕтĕмлетмелле.

Йĕркипе пăхса тухар-ха. Авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче, сасăлав пуçланиччен пĕр эрне маларах, патшалăх агентстви ТАСС виçĕ социологи компанийĕн – ВЦИОМ, ФОМ тата Социаллă маркетинг институчĕ – прогнозне пичетлерĕ. Виçĕ служба та оппозицирен аякра тăраççĕ. Ку – официоз.

Пурте вĕсем суйлава каякан çынсен шутне яланхи шайрах «50% процентран кăшт пысăкрах» палăртрĕç. «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» рейтингĕ 29,5%. Сасăлава чăнласах хутшăнакансен хушшинче 35%.

Малалла: суйлав хыççăн тепĕр икĕ эрнерен, юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче, ВЦИОМ çĕнĕрен «Пĕрлĕхлĕ Раççей» рейтингне пĕлтерет. Вăл малтан мĕнле пулнă çавăн пекех: 29,5%. КПРФăн – 23,3%. Тепĕр темиçе кунран, юпан 5-мĕшĕнче, никама пăхăнман службăсенчен пĕрин тĕпчевĕнче суйлав хыççăнхи ыйтăм кăтартăвĕсене пĕлтернĕ: граждансен 38% суйлавра «Пĕрлĕхлĕ Раççейшĕн», 24% КПРФшăн сасăланине палăртнă.

Хăть мĕнле çавăрттар та эпир вăйсен шайлашăвĕн çирĕп чиккисене куратпăр. Тĕрĕссипе, вĕсем эпир авăн уйăхĕн 19-мĕшĕнче ЦИК мониторĕ çинче сасăсен 10 процентне тĕрĕсленĕ хыççăн курнă цифрăсемех: 38,8% тата 25%. Суйлава пынă çынсен официаллă статистикипе те пĕрешкел пулса тухать: 51,7%. Геоографсен тата математиксен тĕпчевĕсене пăхас пулсан та, вĕсен грфикĕсем яланах ĕненмелле пулакан, чăнласа суйлава хутшăннă çынсен йышĕ 10 процент сахалрах пулса тухать. Çапла вара «38% тата 25%» хисепсем «34% тата 27%» хисепсене куçса кайнă пулĕччĕ. Сахалтан та!

ЦИК, паллах, пире тата нумайрах ĕмĕтленĕр тесе хуравлĕ. Анчах та çак цифрăсенче тата



тишкерӳсенче – çынсемпе калаçнă май çирĕпленнĕ шухăшсем. Эпир хăюллăнах пĕтĕмлетсе калама пултаратпăр: **влаç, сăмах та çук, хăйне кирлĕ пек Патшалăх Думи йĕркелерĕ. Анчах та общество кăмăл-туйăмĕ урăхларах. Эпир пуринпе те пĕр тан конкуренцие кĕтĕмĕр.**

Кампанин тĕп шухăшĕ шăпах çакăнта. Эпир пĕр-пĕрне саламлама пултаратпăр. Паллах, савăнмалли çук, граждансен чăн шухăш-кăмăлĕ хăйĕн çулне тупма пултараймарĕ. Анчах та уçăмлă тренд пур, малашнехи ĕçре эпир ун çине тĕревленме пултаратпăр. Çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

Суйлавăн официаллă кăтартăвĕсем пирки калас пулсан, Тĕп суйлав комиссийĕ пĕлтернĕ тăрăх, 56,5 миллион çын сасăланă. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» 49,8% пухнă, 28 миллион ытларах сасă. 2016 çултипе танлаштарсан влаç партийĕн проценчĕ те, сасăсен шучĕ те чакнă, апла пулин те пĕр мандатлисене пула каллех нумай йышлă пулса тăчĕ.

**Пирĕн парти 18,93´ пухрĕ, 11 миллиона яхăн сасă.** ЛДПР тата «Тĕрĕс Раççей» пĕрешкелтерех: 7,5% яхăн, 4 миллион ытла сасă. Çав вăхăтрах Жириновский партийĕн, антикоммунизм çине пусăм тунăскерĕн, кăтартăвĕсем иртнĕ суйлавринчен чылай япăхрах: 2,6 миллион сасă сахалрах, пĕтĕмпе те 21 мандат, 90-мĕш çулсен вĕçĕнчи евĕрлĕ ӳкерчĕк. «Тĕрĕс Раççей» вара округсенче çĕнтернĕрен мандатсен шучĕпе вĕсенчен иртсе кайрĕ. Захар Прилепин тата Геннадий Семигин пĕрлешĕвĕ вĕсене 2016 çултипе танлаштарсан 1% ытларах пухма май пачĕ. Патшалăх Думине влаçăн çĕнĕ политика проекчĕ «Çĕнĕ çынсем» те кĕрсе кайрĕ. Вĕсем 5,3% тата 3 миллионран кăшт сахалрах сасă пухрĕç. Ытти 9 парти пĕрле 9% сахалрах пухрĕç.

Официаллă цифрăсене пăхсан та эпир иккĕмĕш вырăн йышăннине çеç мар, иттисенчен чылай маларах тăнине куратпăр. Кунашкалли юлашки 20 çулта пулманччĕ-ха. 2016 çулти федераци суйлавĕпе танлаштарсан **пирĕн процентсем 5,6 чухлĕ ӳсрĕç. Пирĕн фракцие 15 депутат хушăнчĕ. Пирĕнпе пĕр шухăшлисен йышĕ 3 миллион та 560 пин çын нумайланчĕ.** Эпир 57 мандат, çак шутран пĕр округлисенче 9 – çĕнсе илтĕмĕр.

**Ку кирек мĕнле пулсан та – хальхи вăхăтри хутăш суйлав системин условийĕсенче лайăх кăтарту.** Кунсăр пуçне вăл 2007 çулти федераци суйлавĕн кăтартăвĕсенчен те лайăхрах, ун чухне парти списокĕсем тăрăх кăна суйланă. Йывăр условисенче пирĕн çирĕплĕхе палăртакан пысăк пĕлтерĕшлĕ кăтарту! Эпир влаç партийĕпе çеç мар, пысăк калăпăшлă административлă юхăмпа кĕрешнине те асра тытмалла.

*Малалли 2-мĕш стр.*

# КПРФ Тĕп Комитечĕн Президиумĕ 2021 çулхи суйлав кампанийĕн кăтартăвĕсем тата

Малалли. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.

Вăйсен шайлашăвне пăсма усă курнă хатĕрсене пăхса тухар-ха.

**Пĕрремĕшĕ.** Суйлав каллех çĕнĕ йĕркепе иртрĕ. Пĕр суйлав та влаçшăн усăллă улшăнусемсĕр иртмест. Хальхинче сасăлав виçĕ куна тăсăлчĕ. Малтанхи икĕ кунĕн, пĕр енчен, малтанхи сасăлав статусĕ пулмарĕ. Тепĕр енчен, вĕсен тĕлĕшпе сасăлав кунĕшĕн пĕлтерĕшлĕ хăшпĕр норма вăйра тăмарĕ. Çакăн пек «право вакуумĕ». Сасăлава чарма юраман приниципа сĕмсĕррĕн пăсрĕç. Икĕ каçлăх, 24 сехетлĕх, тăхтав сăнавçăсен ĕçне питĕ кăткăслатрĕ, бюллетеньсемпе мĕн тăвас килнине тума май пачĕ. Кунсăр пуçне ĕç кунĕнчи, эрнекунхи, сасăлав патшалăх ирĕкĕнчи ĕçченсене çирĕппĕн тĕрĕслесе тăма пулăшрĕ. Эпир çынсен кăмăлсăр сăнĕсене, пĕр вăхăтра суйлав участокĕсене ушкăнпа кĕпĕрленсе килнине, черете тăнине лайăх куртăмăр.

**Иккĕмĕшĕ.** Тĕлĕнмелле майпа участок тулашĕнче «килте сасăлакансен» проценчĕ ӳсрĕ. Патшалăх Думин 2011 тата 2016 çулсенчи, Раççей Президенчĕн 2018 çулти суйлавĕсенче те килте сасăлакансен шучĕ 7%, 5 миллион суйлавçăран иртмен.

Хальхи суйлавра çакăн пек сасăланисен 14,4% шута илнĕ, ку вăл 8 миллион ытла çын. Рекордсмен – Еврей автономи облаçĕ, 35% ытла! Тата 33 регионта çак кăтарту 15-32%. Çакăн пеккисен шутĕнче, шел те, Севастополь /30%/ тата Крым /20% ытла/ та пур. Унта Александр Тарнаев кампание харсăр тата хастар йĕркелерĕ, халăха пухрĕ, анчах та «вилĕ чунсем» лару-тăрăва витĕм кӳчĕç.

Коронавируспа çыхăнтарни кунта вырăнсăр. Пирĕн юлташсем пур çĕрте те сасăсене пухнин хăвăртлăхĕ çын вăй-халĕпе килĕшсе тăманнине çирĕплетрĕç. Çакă пĕтĕмпех РФ ЦИК председателĕ Э.Памфилова утă уйăхĕнче «килте сасăлакансен йышĕ нумай пулмалла мар» тесе каланă вăхăтра пулса иртрĕ.

**Виççĕмĕшĕ. Вăйлă шăв-шав çĕклекен хăрушă çĕнĕлĕх: дистанци мелĕпе йĕркеленĕ электронлă сасăлав.** Сасăлава темиçе тăснă чухне анăçри темĕнле опыта тĕпе хураççĕ. Электронлине вăя кĕртнĕ чухне çакăн евĕрлĕ сасăлава аталаннă çĕршывсенче пăрахăçлани çине алă сулаççĕ. Раççейре вăл хальлĕхе 7 регионa пырса тиврĕ: Курск, Мурманск, Чулхула, Ростов, Ярославль облаçĕсем, Севастополь тата Мускав. Тĕп хулара çакăн пек сасăлакансем уйрăмах йышлă пулнă: 50%. Шăпах кунта мĕн сехĕрлентерни çирĕпленчĕ.

Дистанци сасăлавне шута иличчен «чĕрĕ участоксенче» списоксем тăрăх КПРФ тата влаç партийĕ 29,6% тата 29,4% пухнă, КПРФ пĕр мандатлă 15 округран 6-че çĕнтернĕ. Анчах та электронлă системăри нумай сехетлĕх тăхтав хыççăн списоксем тăрăх КПРФ кăтартăвĕсем 15% кăшт кăна ытларах пулчĕç, влаç партийĕн представителĕсем мĕн пур округра çĕнтерĕ иккен! Кун пекки пулма пултараймасть. Иккĕлентерекен «общество штабĕсем» ăнлантарма хăтланнисем ытла та кулăшла тата ĕненмелле мар илтĕнчĕç.

Сасăлав кăтартăвĕсене пăхса тухакансем Правительство хушăвĕпе ĕçлекен подрядчиксем, ĕç-хĕл суйлава тӳрремĕн хутшăнакансемшĕн уçăмсăр, вĕçĕнче пĕтĕмпех пуç хĕрлĕн çаврăнса тухать пулсан мĕне шанмалла?

Электронлă сасăлавра пĕр суйлавçă темиçе хутчен те сасăлама пултарать. Ку улталамалли тепĕр меслет çеç мар, тĕрлĕ услови туса хуни те. Ытти суйлавçăсен кунашкал май пулман. Хăть мĕн каласан та КПРФ Мускаври электронлă сасăлав кăтартăвĕсене йышăнмасть.

**Тăваттăмĕшĕ.** Паллах, суйлава хутшăнакансен йышĕ. Ытти технологисен ĕçне уçăмлатакан, вăйсен процент шайлашăвне пăснине кăтартакан пулăм. Хальхинче те мĕн пур наукăсен саккунĕсене хирĕçлекен «правило» пулчĕ: сасăлакансен йышĕ ӳснĕ май влаç партийĕ майлисен шучĕ ӳсет, ыттисен чакать. Сасăлакансен йышĕ 40% пĕчĕкрех 12 субъектра «Пĕрлĕхлĕ Раççей» 29-30% пухнă – каллех çав социологи виçевĕсем палăртакан хисепсем. Сасăлакансен йышĕ 65 процентран пысăкрах 16 регионта – 61-95%! Çак списока наци республикисем лекни хурлăхлă йăла пулса тăчĕ пулин те Брянск облаçĕнчи цифрăсем чăннипех те пăлхантараççĕ. Кӳршĕллĕ 4 регионта сасăлакансен йышĕ 42-50%, влаç партийĕн кăтартăвĕсем 36-44%. Брянск облаçĕнче 69% сасăланă, влаç партийĕн 64%. Эпир Александр Богомаз кĕпĕрнаттăра çине тăрсах отставкăна яма ыйтатпăр.

Кашни регионтах хăйне евĕрлĕ çитменлĕхсем, çак шутра кивĕ технологисемпе: бюллетеньсене улăштарни, суйлав участокĕсене çынсене илсе пыни, сейф-пакетсемпе улталани – пур. ЦИК Президиумĕ пĕлтернинче эпир уйрăмах вăйлă улталанă территорисен шутĕнче Ингушетие, Çурçĕр Осетие, Тывана, Брянск, Кемер, Ростов, Тюмень облаçĕсене тата Крыма палăртрăмăр.

**Пиллĕкĕмĕшĕ.** «Спойлерсем», вĕсем суйлава хутшăннин тĕллевĕ ялан пĕрешкел: пире пур енчен те вăйсăрлатасси. Çак професси «ветеранĕсем» – «Раççей коммунисчĕсем» тата «Пенсионерсен партийĕ» – аслă ăрурисен хушшинче ĕçлерĕç. Кунсăр пуçне çĕнĕ икĕ проект хатĕрленĕ: «Çĕнĕ çынсем» тата «Раççейри ирĕклĕхшĕн тата тĕрĕслĕхшĕн парти». Вĕсен тĕллевĕ КПРФ тавра пухăнакансен йышне чакарасси пулнă.

Дебатсен вăхăтĕнче эпир лайăх куртăмăр, çак партисем хăйсен программисем, çĕршыври çивĕч ыйтусем тавра калаçмарĕç, КПРФа тӳнккерĕç. Пĕрешкел пластинка, пĕрешкел методика пулчĕ.

Кивĕ тепĕр чир, усал вăл – пĕрешкел ятсемпе усă курни. Урамра 2021 çул, анчах та питĕ киревсĕр çак мел вырăнне урăх нимĕн те шухăшласа тупаймаççĕ. Апла тăк – ăнăçлă. Пирĕн кандидатсемпе пĕр пек хушаматлă тата ятлă çынсем Мари Элте тата Бурятире суйлава хутшăннă, Мускавра çак юхăм анлă сарăлнă. Омск облаçĕнче те вĕсем регион суйлавĕн кăтартăвĕсене вăйлă витĕм кӳчĕç. Çакăн пек тĕслĕхсене ытти партисен кандидачĕсен тĕлĕшпе те шута илнĕ. Петербургри пĕр округра пĕрешкел хушамат виççĕ пулнă. Çакă пирĕн суйлав чăнлăхĕн карикатури пек анлă сарăлчĕ.

**Улттăмĕшĕ: юрăхсăр кандидатсене суйлава хутшăнтарманни.** Пирĕн тĕслĕхре пĕр-пĕр кандидат пирки мар, Павел Николаевич Грудинин пирки сăмах пырать. 2018 çулхи суйлавра уншăн, Президент кандидачĕшĕн, миллионшар çын сасăланă.

Анчах та темĕнле пачах та ăнланмалла мар документпа килĕшӳллĕн ăна суйлава хутшăнма чарнă. Чарнă, анчах кампанирен кăларман. Павел Николаевича тав тăвар, вăл ыттисемпе танах КПРФăн суйлав пĕрлĕхне пулăшассишĕн мĕн пур вăйран тăрăшрĕ, регионсем тăрăх çӳрерĕ, МИХсемпе ĕçлерĕ. Çавăн пекех пирĕн ăна хӳтĕлеме йĕркеленĕ кампани агитаци кампанийĕн пĕр пайĕ пулса тăчĕ.

Кампани пуçланиччен чылай малтан Николай Николаевич Платошкина та суйлава хутшăнмалли ирĕкрен хăтарчĕç. Апла пулин те вăл пирĕнпе пĕрлех пулчĕ, пĕрлехи ĕçшĕн вăйне шеллемерĕ, нумай тухса çӳрерĕ, çынсемпе тĕл пулчĕ.

**Çиччĕмĕшĕ: суйлавçăсене улталани.** Малтан влаç партийĕ список пуçламăшне çĕршыври хисеплĕ министрсене Сергей Шойгуна тата Сергей Лаврова тăратрĕ. Вĕсем çине таянса кампание йĕркелерĕ. Унтан вĕсем мандатсене пачĕç. Юрать, ку айсберг тăрри тейĕпĕр. Цифрăсене тĕплĕнрех тишкерер-ха: «Пĕрлĕхлĕ Раççейрен» спископа суйланнă 126 çынран 82-шĕ мандатсене панă» Иккĕ виççĕмĕш пайĕ! Çакă йĕркеллĕ-и?

**Саккăрмĕшĕ: агитаци тан марлăхĕ.** Шутланă тăрăх, çĕнĕ кăларăмсен эфир вăхăчĕн 60 процентне влаç партийĕ йышăннă. Информаци агитаципе хутшăнса кайнă.

Пирĕн юлташсем дебатсен шутлă çеккунчĕсен вăхăтĕнче мĕн те пулин каласа ĕлкĕрес тенĕ хушăра «Пĕрлĕхлĕ Раççей» ĕç-хĕлне Президент тата Раççей Правительствин членĕсен мероприятийĕсенче сехечĕ-сехечĕпе çутатнă. Тĕпрен илсен, яланах çапла пулнă. Анчах хальхинче нимĕнрен те намăсланманни тӳрех куçа тăрăнчĕ. Çаплах пулмалла тейĕн, анчах та саккунра патшалăх телевиденийĕнче вăл е ку суйлав пĕрлĕхне ытларах вăхăт уйăрма юраманнине палăртнă.

Çавăн пекех вырăнсенче пирĕн агитаторсен ĕçне чăрмантарнă, пирĕн продукцие туртса илсе тĕп тунă, активистсене тытса чарнă. Влаç партийĕ майлă мар кирек епле агитацие те темĕнле киревсĕр ятапала тан туса хураççĕ. Пирĕн агитаци майĕсем «Единороссен» агитацийĕн хăть çуррийĕ чухлĕ пулнă тăк мĕнлерех кăтартусем пулнă пулĕччĕç.

**Уйрăм тема:** КПРФа хирĕçле йĕркеленĕ контрпропаганда. Малараххи çулсенче ăна антисовет халапĕсене тĕпе хурса йĕркеленĕ пулсан халĕ **çĕнĕ меслет тупăнчĕ: чăнлăха пăсни.**

Суя материалсене пурте асăрхарĕç-тĕр: темĕнле пирĕн роликсем, темĕнле çырусем, заявленисем, вăл е ку паллă деятель палăкĕ умне чечек кăшăлĕ хуни тата ытти те. Пĕр материалта эпир ытлашши лояльлĕ, тепринче «ытлашши радикаллă». Антикоммунистсем КПРФшăн ытлашшипех пăшăрханса ӳкрĕç.

Суя юхăмсене сирсе яма телеграмм-каналсемпе усă курчĕç. Влаç партийĕн наемникĕсем ку суйлавра фейксен фабрикине туса лартрĕç. Ахăртнех, унта вĕсен ăру улшăннă. Намăса пĕлмесĕр пире питлерĕç. КПРФ кампание мĕн таран кăра йĕркелемерĕç пулин те пирĕн юлташсем вĕсен кĕрешĕвĕн меслечĕсемпе сăмахĕсем патне çывăха та пыраймарĕç. КПРФ ят-сумĕ ӳссе пыни хăратнăран влаç партийĕн технологĕсене темĕнле киревсĕр политика чирĕ ерчĕ пулас.

Эпир ăнлантарма е тӳрре тухма тăрăшмарăмăр. Çынсем çак суяна ĕненменнине, пулса иртнин сăлтавĕсене ăнланнине туйрăмăр. Тĕрĕссипе, ку суйлав КПРФшăн автомобилистсем калашле «краш-тест» пек пулчĕ: вăйсăр вырăнсене тата сиен шайне палăртнине тĕрĕслени пулчĕ. Эпир ку тĕрĕслеве ытлашши сиенсĕр тӳссе иртерме пултартăмăр.

**Юрий Афонин ертсе пынă Тĕп суйлав штабĕ тата оперативлă штаб** пирĕн программăна пропагандăлассипе тата регионсенчи штабсене пулăшса пырассипе витĕмлĕ ĕçлерĕ. Ĕç-хĕле куллен парти тата халăх-патриотизм вăйĕсен лидерĕ Геннадий Зюганов сăнаса-йĕркелесе тăчĕ. Вăл хăйĕн тĕслĕхĕпе ĕçе пĕр кунлăха та чарса тăратма юраманнине çирĕплетсе пачĕ.

Оппонентсем «вату политиксем» пирки нăйкăшнă вăхăтра вăл хуласем тăрăх çӳрерĕ, çынсемпе тĕл пулчĕ, видеоконференцисем ирттерчĕ. «Комсомольская правда» радиостанцин эфирне кашни эрнере тухма пултарчĕ. ТАСС мультимеди лапамĕнче 8 пысăк пресс-конференци йĕркелесе ирттерчĕ. **Суйлав пĕрлĕхĕн программипе тата пирĕн команда представителĕсемпе паллаштарасси кунран кун ăнăçлă пулса пычĕ.** Парти ертӳлĕхĕпе пĕрле пирĕн программа пирки Светлана Савицкая, Николай Платошкин, Олег Смолин, Николай Бондаренко, Анастасия Удальцова, Денис Парфенов, Мария Прусакова, Олег Михайлов тата ыттисем каласа кăтартрĕç. **Кашни ĕçĕн хăйĕн тĕсĕ, анчах та пурне те хĕрлĕ тĕс пĕрлештерсе тăрать.**

Парти программине вăйлатма Владимир Кашин, Николай Арефьев, Николай Коломейцев пысăк тӳпе хыврĕç. Ăна хатĕрлеме пысăк форумсем, вун-вун çавра сĕтел йĕркеленĕ. Пирĕн управленецсем Андрей Клычков, Валентин Коновалов, Анатолий Локоть паха тĕслĕх кăтартрĕç.

**Пирĕн ĕç-хĕл нумай енлĕ пулчĕ тата пур сферăна та пырса тиврĕ.** Сергей Шаргунов тата Лариса Баранова-Гонченко пултарулăх интеллигенцийĕпе тата культура деятелĕсемпе йĕркеленĕ тĕлпулусенчен пуçласа КПРФ спорт клубĕ ирттернĕ ăмăртусем таранах.

Партин пур службипе пайĕсем те хастар ĕçлерĕç. **Дмитрий Новиков, Борис Комоцкой, Станислав Аниховский пропаганда ĕçĕнче вăй хучĕç.** КПРФ Тĕп Комитечĕн агитаци тата пропаганда пайĕ пирĕн программăн тĕп пункчĕсемпе баннерсен, листовкăсен макечĕсене, **«За СССР – за Сильную, Справедливую, Социалистическую Родину!»** слоганпа, парти лидерĕсен чĕнĕвĕсемпе тата эпир малашлăха мĕнле курнине халалланă 14 видеоролик тата 14 аудиоролик хатĕрлерĕç. Ака уйăхĕнчен пуçласа авăн уйăхĕччен **«Правда» хаçатăн ятарлă кăларăмĕсем** тухса тăчĕç: тăватă хутчен 35 миллион тиражпа кăларма май килчĕ. 5 миллион тиражпа сарăлнă **«Халăх влаçĕ патне 10 утăм»** буклетăн ят-сумĕ уйрăмах пысăк пулчĕ. **«Красная линия» канал** хастар ĕçлерĕ. Пирĕн студире лару-тăрăва тишкерекен интеллектуалсем, ученăйсемпе экспертсем пирĕн ĕç-хĕле пуянлатрĕç.

**Йĕркелӳ пайĕ тата юридици службисем уйрăм тава тивĕç.** Пирĕн кандидатсен документчĕсене хатĕрлес тата регистрацилес тĕлĕшпе вĕсем питĕ кăткăс ĕç пурнăçланă. Суйлав кăтартăвĕсене тĕрĕслеме хутшăннисене тав тăватпăр. Пирĕн ун пеккисем çĕршывра 300 пин çын пулнă. КПРФ Тĕп Комитечĕн секретарьне Александр Ющенкона **бюллетеньре пĕрремĕш номер** туртса кăларнăшăн уйрăммăн тав тумалла.

# парти позицийĕсене çирĕплетессин тĕллевĕсем çинчен III ПЛЕНУМра тунă доклачĕ

**Интернетра та ĕç анлă сарăлчĕ.** Парти сайчĕ тата социаллă сетьсенчи, уйрăмах Контактри пирĕн аккаунтсем цифра материалĕсене сарас тĕлĕшпе пысăк пĕлтерĕшлĕ пулчĕç, тĕрлĕ пулăма хăвăрт асăрхама май пачĕç. Хĕрлĕ телеграмм-каналсене ытларах асăрхама пуçларĕç. «Советская Россия» халăх хаçачĕ яланхи пекех çивĕч пулчĕ: çивĕч ыйтусене çĕклекен публицистика пичетлерĕ. Пирĕн юлташсем телеэфирта та хастар пулчĕç: федераци дебачĕсене 11 çын хутшăнчĕ. Ютубра тата Тик-токра пирĕн регион дебачĕсене хутшăнакансен вирлĕ янăрарĕç.

РФ Патшалăх Думинчи КПРФ фракцийĕн депутачĕсем суйлав умĕнхи повесткăна хăйсен пуçарăвĕсемпе пулăшса пычĕç: пенси реформине пăрахăçласси, ППЭ тытасси ирĕклĕ пулмалли, ĕçлекен пенсионерсен пенсийĕсене индексацилесси тата ытти те.

Кампани ирттернĕ чухне укçа-тенкĕ енчен те эпир парламента лекнĕ партисенчен чи перектлисем пултăмăр. ЛДПР 700 миллион тенке яхăн, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» 600 миллион тенке яхăн, «Тĕрĕс Раççей» 542 миллион тенкĕ, «Çĕнĕ çынсем» 455 миллион тенкĕ, КПРФ 178 миллион тенкĕ тăкакланă.

Эпир влаç технологийĕсен купи айне пулманни – пирĕн регионсенчи уйрăмсен, парти компанине йĕркелеме хутшăннă, кандидатсене пулăшса пынă организацисен командисен тава тивĕçлĕ ĕçĕ. Паянхи техника çак ĕçе аякран курма май парать.

**Цифрăсене пăхас пулсан эпир лайăх процентсем çинчен çеç мар, çĕнтерÿ пирки те калаçма пултаратпăр!** Вĕсем тăваттă: Мари Эл /36%/, Якути /35%/, Ненец автономи округĕ /32%/, Хабаровск крайĕ /26,5%/. Çавăн пекех пирĕн 30 процентран Ульяновск облаçĕнче /33%/, Омск облаçĕнче /31%/, Алтай крайĕнче /30,5%/ ытларах, Алтай Республикинче 30%, Хакасире 30% яхăн. Тепĕр 14 регионта 25-39% шайĕнче пырать. 24 регионта 20-25%.

2016 çулти суйлавра танлаштарсан пирĕншĕн сасăлакансем Мускавра /506 пин ытла/, Мускав облаçĕнче /233 пин/, Краснодар крайĕнче /180 пин/, Свердловск облаçĕнче /175 пин/, Тутарстанра /131 пин/, Санкт-Петербургра /122 пин/ тата Ростов облаçĕнче /121 пин/ хушăннă.

Пилĕк регионта: Ингушети, Тюмень облаçĕ, Кабарда-Балкар, Çурçĕр Осети тата Пушкăртстан – чакнă.

**Хăш-пĕр регионта эпир чăннипех те çĕнтернĕ. Унта пирĕн кăтартусем те лайăх, пĕр мандатлă округсенче çитĕнÿ те пур.**

Тĕслĕхрен, Омск облаçĕнче 31% пухнă çеç мар, икĕ округра çĕнтернĕ те /Олег Смолин тата Андрей Алехин/. Самар облаçĕнче 23%, вăл пирĕн майлисем ытларах вунă регион шутĕнче, округсенче икĕ çĕнтерÿ /Леонид Калашников тата Михаил Матвеев/. Комире 27% яхăн пухнă, «Пĕрлĕхлĕ Раççейрен» 2,5% кăна сахалрах, кунсăр пуçне тата округра та çĕнтернĕ /Олег Михайлов/.

Мари Элте /36%/, Якутире /35%/, Алтай крайĕнче /30,5%/ тата Иркутск облаçĕнче /27,8%/ кăтартусем лайăх, округсенче Сергей Казанков, Петр Аммосов, Мария Прусакова тата Михаил Щапов çĕнтерчĕç. Çак регионсем – влаç партийĕнчен çĕнсе илнĕ территорисем.

**Çак юхăм вăйлансах пырать. Вăл суйлав администраторĕсем сахалрах тимлĕх уйăрнă регион суйлавĕсенче уйрăмах лайăх курăнать.**

Пирĕн анлă географиллĕ çакăн евĕрлĕ 39 кампани пулнă. Вĕсене 2016 çулти пĕр кунхи сасăлав кăтартăвĕсемпе танлаштарас тăк – питĕ кăсăклă пулса тухать. Пĕтĕмпе пирĕн çав регионсенче 158 мандат, списоксем тăрăх 150 тата округсенче 8, пулнă. Халĕ вара 254 çитрĕ, çак шутран списоксем тăрăх 177 тата округсенче 77. 96 мандат хушăнчĕ!

Пысăк фракцисем Алтай крайĕнче – 68 мандатран 24, Липецк облаçĕнче – 42 мандатран 15, Приморье крайĕнче – 40 мандатран 14, Оренбург облаçĕнче 47 мандатран 12, Пермь крайĕнче 60 мандатран 11, Орел облаçĕнче – 50 мандатран 11, Самар облаçĕнче – 50 мандатран 10, Омск облаçĕнче – 44 мандатран 10, Свердловск облаçĕнче 50 мандатран 9, йĕркеленчĕç. Хăш-пĕр регионта фракцисем пысăках мар, анчах унта депутатсен корпусĕ пĕчĕкрен КПРФ шайĕ пысăкланать.

Пĕлетĕр-и, хăш-пĕр субъектра депутатсен йышне чакарнă е пĕр мандатлисен шутне пысăклатнă, е апла та, капла та тунă. Эпир çакна та парăнмарăмăр. **Списоксем тăрăх мандатсене 27 ÿстертĕмĕр, округсенче 69!** Чи лайăх кăтартусем Алтай крайĕнче – 15 мандат, Липецк облаçĕнче – 12, Приморье крайĕнче – 11 /çак шутран 8-шĕ Владивостокра!/. Чылай регионта пире ырлакансен шучĕ палăрмаллах ÿсрĕ. Лидерсен шутĕнче Приморье крайĕ /21%-ран 31%/ тата Оренбург облаçĕ /20,6%-ран 29%/.

39 субъектра эпир КПРФшăн сасăланă суйлавçăсен шутне те палăрмаллах пысăклатрăмăр: 1 миллион та 120 пин чухлĕ /32%/.

Паллах, сасăсен шучĕ ÿсни суйлавçăсен шутĕнчен те килет. Çапах та лидерсене палăртса хăварар-ха: Мускав облаçĕ – 177 пин /53%/, Свердловск облаçĕ – 170 пин /87%/ тата Санкт-Петербург – 100 пин /72%/.

2016 çулти регионсенчи суйлаврипе танлаштарсан КПРФшăн сасăланисен шучĕн хушăмĕ Свердловск облаçĕнче – 87%, Ханти-Манси округĕнче – 74%, Ленинград, Вологда облаçĕсенче тата Санкт-Петербургра 70% ытларах.

**Хăш-пĕр регионта пачах çĕнĕ электората çĕнсе илме май килчĕ:** 13-15%-ран 20% ытларах. Ку вăл Красноярск тата Камчатка крайĕсем, Чăваш Ен, Вологда, Свердловск тата Ленинград облаçĕсем. Алтай крайĕнче çĕнĕ йĕрке çирĕпленчĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» 68 депутатран 31 кăна.

Палăртса хăвармаллах, **хăш-пĕр регионта тахçан çирĕпленнĕ политика атмосфери улшăнать.** Нумайăшĕ тĕрĕс калать, КПРФ Инçет Хĕвелтухăçĕнчен ЛДПРа хĕссе кăларать. Унтан кăна мар. Мурманск облаçĕнчи регион суйлавĕсене пăхăр-ха. Вĕсен 21%, пирĕн 12,3% пулнă. Халĕ пирĕн 19,6%, вĕсен 13,3%. Либераллă Санкт-Петербурга пăхăр тата. Унччен ЛДПР пирĕнтен малта пулнă, «Яблоко», «Ÿсĕм партийĕ», «Тĕрĕс Раççей» партисенчен 1-2% кăна нумайрах пулнă. Халĕ эпир 17,5% вĕсенчен чылай мала кайнă, иккĕмĕш вырăнта тăратпăр. «Тĕрĕс Раççей» те, «Çĕнĕ çынсем» те пирĕн çывăха та пыраймаççĕ. Пуян региона Ханти-Манси округне пăхăр тата. 2016 çулта виççĕмĕш пулнă, халĕ иккĕмĕш вырăнта /17,2%/. «Тĕрĕс Раççейĕн» тăван тăрăхне – Астрахань облаçне пăхăр тата. Эсерсен унта 21,5% пулнă, халĕ 16,3%, вĕсем пирĕнтен кайра /18,2%/.

*Хисеплĕ юлташсем!*

Паян эпир питĕ хăйне евĕрлĕ саманара пурăнатпăр. Эпир халăхăн вăйне пухса пĕрлештерме пултартăмăр. Пире шанаççĕ. Пирĕн партине пурте тата пур çĕрте те сÿтсе яваççĕ. Çакна çухатас марччĕ, ăна аталантарассишĕн тăрăшасчĕ. Пĕр вырăнта чăрăнса тăма пултараймастпăр: е малалла каймалла, е каялла чакмалла. Малалла куçмалли пĕлтерĕшлĕ тĕллевсене палăртар-ха.

**Пĕрремĕшĕ. Пĕрлĕхе тата дисциплинăна çирĕплетесси.** Яланхи сăмахсем, анчах çĕнĕ сĕмпе. Пирĕн оппонентсем КПРФ тĕревĕ ÿснине кураççĕ. Хальи пек лару-тăруга КПРФăн тата унпа пĕр шухăшлисен малашлăхĕ лайăх пуласси- не ăнланаççĕ. Çавна май суйлав хыççăн та влаç пропагандисчĕсем куллен пирĕн парти арканни пирки калаçаççĕ. Пирĕн парти ăшĕнче мĕнле ушкăнсемпе фракцисем пурри пирки юмах яраççĕ. Лидерсене тÿнккеççĕ. Кама тата хăçан ĕçрен кăлармалли пирки каласа кăтартаççĕ. Ярлăксем çакаççĕ. Чăн-чăн коммунистăн мĕнле пулмаллине татса параççĕ.

Пирĕн парти истори музейĕн филиалĕ пулса тăни, тĕнчери çивĕч ыйтусем тавра кăна калаçни, никама та критиклеменни тата çирĕп палăртнă вырăна кăна йышăнни вĕсемшĕн, паллах, кăмăллă пулĕччĕ. Ахăртнех, çакăн пек ЛДПР пурăнма пултарать, унпа пĕр шухăшлисем чакса пыраççĕ, вăл шăпана тав тума тата пуç тайма чарăнаймасть.

**Анчах та пирĕн парти – марксизм-ленинизм, идеологи партийĕ.** Кун пек парти яланах ăнăçлă тата тухăçлă ĕç меслечĕсене шырать, халăха çывăх тата вăхăт ыйтнипе килĕшсе тăрать.

«Политика партийĕсем çинчен» саккунпа килĕшÿллĕн патшалăх влаç органĕсен политика партийĕсен ĕç-хĕлне хутшăнма юрамасть. Ахăртнех, пирĕн «патшалăх МИХĕсен» тĕлĕшпе пирĕн устав ыйтăвĕсене татса пама хутшăнмалла марринe пусăм туса саккуна тÿрлетÿсем хушмалли пирки шухăшламалла.

**Халĕ пирĕн çак кăмăллах мар пулăм тавра тата та тачăрах пĕрлешмелле.** Пирĕнтен кашни хăйĕн вырăнĕнче ыйтусене татса панине асра тытмалла, кĕпĕрнаттăр посчĕ-и вăл е трибуна-и – парти Уставне тата юлташлăх принципĕсене çирĕп пăхăнмалла.

**Иккĕмĕшĕ. Пирĕнпе пĕр шухăшлисен хушшинче ăнлантару ĕçне йĕркелесси.** Кунта та савăл çапса кĕртме хăтланаççĕ. Партин иммунитечĕ çирĕп пулсан та, союзниксен тĕлĕшпе кăткăсрах. Пĕрремĕш тĕрĕслев витĕр эпир çăмăллăнах тухайрăмăр. Суйлавра КПРФ майлă пулнисем кайран урăхла калаçма пуçларĕç. Зюганов Президента электрон сасăлав пирки каламан имĕш, КПРФ пуринпе те кăмăллă, партире вăл е ку ĕçе те тума пултаракан хастар çынсем пур, анчах парти ертÿлĕхĕ ирĕк памасть иккен. Пĕтĕм çак сÿпĕлти сăмаха сулахай вăйсен кун йĕркинчен кăларса пăрахмалла, татăклă йышăну тумалла.

Парти председателĕ Президента пĕтĕмпех каланă, çак ĕçе мĕнле майпа тумаллине ăна пирĕн вĕрентмесен те юрать. Телевиденире эфир чăн калаçуран юлса пычĕ. Урăхларах каланă пулсан унта вуçех те нимĕн те лекмесен те пултарнă. Союзниксем пурте пирĕншĕн хаклă. Юпа уйăхĕн 13-мĕшĕнче Сулахай-патриотизм вăйĕсен канашне йĕркелерĕмĕр. Хамăрăн блока сыхласа хăварасшăн кăна мар эпир, ăна çирĕплетсе пырасшăн. Ку вăл темĕнле технологи мар, çĕршывшăн чăмăртанни.

КПРФ интернетри «хĕрлĕ» мĕнпур ресурса тата канала, активистсене малашне те партипе тачă çыхăну тыттарасшăн. Центрта та, регионсенче те çак ĕçĕн мелĕсемпе сăлтавĕсене шырамалла. Идейăллă, хăюллă, интереслĕ çынсене туртса кăлармалла. Пурте пĕрле пулни мĕн тери хăватлă вăй пулнине хамăрах куртăмăр.

Хăшĕ-пĕри КПРФ «система пайĕ» тесе ÿпкелешет. Атьăр-ха, терминсем пирки татăклă йышăну тăвар. Енчен те система – çĕршыв, апла тăк эпир çĕршыв пайĕ, эпир Тăван çĕршыв патриочĕсем. Раççейĕн наци интересĕсене хÿтĕлессине хамăрăн тÿпене хыватпăр. Енчен те политика системи, эпир, паллах, политика процесĕн юхăмĕнче пулатпăр.

«Система» сăмах тулашĕнче мĕн тăрать-ха? Енчен те вăрттăн организаци тăк, эпир вăрттăн ĕçлеместпĕр. КПРФ парламент партийĕ, вăл саккуна пăхăнать, унпа килĕшÿллĕн кĕрешет. Шăпах çак йĕркепе пурăнса **эпир 30 çула яхăн çĕршыври иккĕмĕш политика вăйĕ статуса çирĕп тытса тăратпăр,** хамăрăн идейăсене ирĕклĕн пĕлтерме, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекенсен çĕнĕ ăрăвне ÿстерме, татăклă йышăнусем тума, ят-сума ÿстерме пултаратпăр. СССР пулнă хăш территорире е Тухăç Европа çĕршывĕсенче компарти çакăн пек сыхланса юлнă? Шел те, ниçта та.

**Эпир урапа çĕр çинче тăни тата чăнчăн политикăра пулни пире малта пыма пулăшать.** Эпир «система ăшĕнче» тесе калама пулать, анчах та эпир çак системăна урăххипе улăштаракан çул-йĕршĕн кĕрешетпĕр. Парламентлă тата парламентлă мар ĕç йĕркине шайлаштарса лару-тăрăва, хăçан тата мĕн вырăнлă тата тухăçлă пулнине тĕрĕс хак парса пыратпăр.

**Виççĕмĕшĕ. Парти структурине çирĕплетесси.** Суйлав яланах мĕн лайăх ĕçленине е ĕçлеменнине палăртма пулăшать. **Уйрăм таран лайăхрах аталанать – кăтартусем çавăн чухлĕ аванрах.** Çак енчен пăхса хакласан паян эпир Алтай, Краснодар, Приморье крайĕсенчи, Свердловск облаçĕнчи уйрăмсене палăртма пултаратпăр. Мордва Республикинчи уйрăм юлашки вăхăтра ăнăçлă ĕçлесе пырать. Çав вăхăтрах ĕç-хĕле начар туса пыракан организацисем те пур-ха.

Партин кашни уйрăмĕн ĕçне тĕплĕ тишкермелле, пуласлăхри кĕрешÿсем валли мĕн лайăхлатмаллине палăртмалла. Суйлав сасăлав йĕркине тата сасăсене шутланине çирĕп тĕрĕслесе тăни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартса пачĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем те пулчĕç: кампанине питĕ ăнăçлă йĕркеленĕ, анчах та участоксенче улталанăран тăрăшни пĕтĕмпех харама кайнă. Сăлтавĕ çакăнта, парти уйрăмĕ йыш пĕчĕкрен е йĕркелÿ ĕçĕнчи çитменлĕхсене пула тĕрĕслев тытăмне кирлĕ пек йĕркелеме пултарайман.

Вĕçĕ 4-мĕш стр.

# КПРФ Тĕп Комитечĕн Президиумĕ 2021 çулхи суйлав кампанийĕн кăтартăвĕсем тата парти позицийĕсене çирĕплетессин тĕллевĕсем çинчен III ПЛЕНУМра тунă доклачĕ

*Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-3-мĕш стр.*

Влаç аван курать: ăçта тĕрĕслесе тăраççĕ – унта эпир çĕнтерме пултаратпăр, çĕнтеретпĕр те. Ахальтен мар ЦИК председателĕ Элла Памфилова суйлав комиссийĕсен канашлакан сасă ирĕкĕ пур членĕсене темиçе хутчен те тапăнчĕ: вĕсем иккен провакаторсем, суйлав комиссийĕсен ĕçне чăрмантараççĕ. Канашлакан сасă ирĕкĕ пур комисси членĕсен полномочийĕсене пĕтерессине тата политика партийĕсене çавăн пек комисси членĕсене çирĕплетме чарассине кĕтсех тăмалла. Ĕç-пуç çак института тĕп тăвасси патнех çитме пултарать. Çакă çитес вăхăтри кампанисенче пирĕн хамăрăн кăтартусене тата та кăткăсрах условисенче хӳтĕлеме тивессине, пирĕн суйлава тĕрĕслесе тăрассине йĕркелеме тата ытларах вăй хумалла пулассине пĕлтерет. **Çавăнпа пирĕн парти уйрăмĕсен йышне ӳстересси тата йĕркелӳ ĕçне вăйлатасси, сăнавçăсене хатĕрлемелли программăна анлăрах пурнăçа кĕртесси мала тухать.**

Партипе интересленнĕ самантпа усă курса юлар: КПРФпа пĕр пулма чĕнер. Тĕп Комитета отчет парассишĕн кăна мар, тĕплĕ ĕçлер. Шанчăклă активистсем кирлĕ. Ку енĕпе Ленинла комсомола та хастартарах ĕçлеме ыйтатпăр.

2022 çулта суйлав иртекен регионсенче çакна уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрмалла. Çĕршыв сăнать: хальхи кампани малалла тăсăлĕ-и е çук-и? Кĕпĕрнаттăр суйлавĕпе тӳрлетӳсем пулма пултарĕç, регионсен суйлавĕсем тĕлĕшпе пĕтĕмпех паллă. Ултă регионта: Çурçĕр Осети, Удмурт Республики, Краснодар крайĕ, Пенза, Саратов, Сахалин облаçĕсенче суйлав иртет. Тĕп хуласенче пулакан суйлавсенче те пирĕн малашлăх пур. Вĕсен ярăмĕ кăсăклă: Горно-Алтайск, Черкесск, Кызыл, Барнаул, Петропавловск-Камчатск, Владивосток, Кировск, Курск, Омск, Псков, Тверь, Ярославль.

Çак кампанисене хатĕрленни çуллахи ĕçĕн тăсăмĕ пулса тăмалла. 2022 çулти юбилей датисем те пулăшĕç: Совет Союзне тата Пĕтĕм Союзри пионерие туса хунăранпа 100 çул çитет.

**Тăваттăмĕшĕ. Хамăр повесткăна çирĕп тытса пырасси.** Çĕнсе илнĕ позицисене çирĕплетме пирĕн тăхтаса тăмасăр социаллă пурнăçпа экономикăри çивĕч ыйтусемпе дискуссисене хутшăнмалла. **Çĕршыв кризисăн çĕнĕ тапхăрне кĕрет.**

Инфляци рекорд лартать, унăн ӳсĕмĕн çулталăкри шайне юпа уйăхĕн вĕçĕнче 7,5% пулассине палăртаççĕ. Хаксем çӳлеллех кармашаççĕ. Çав вăхăтрах парламента пăхса тухма сĕннĕ килес çулхи бюжетра чылай социаллă тата экономика статйипе расхутсене чакарма палăртнă. Экспертсен анализĕ шăпах çакна кăтартатать. Пирĕнпе халех тавлашаççĕ, урăх цифрăсем асăнаççĕ.

Ахăртнех, бюджет тулашĕнчи мĕнпур фондсемпе бюджетсен расхучĕсене пĕрле хушаççĕ те лайăхрах ӳкерчĕк пулса тухать. Ĕçĕ акă мĕнре, унччен пирĕнпе тавлашман: калаçчăрах, бюджета пур пĕр вĕсен тата вĕсен суйлавçисен шухăшне шута илмесĕр йышăнатпăр. Малашне капла пулмĕ. Апла тăк ăслă тавлашмалла, хамăр тĕрĕс пулнине ĕнентермелле.

Çĕнĕ çултан Правительство капиталлă юсав взносне 25 процент ӳстерет текен хыпар шăвшав çĕклерĕ, Ĕçлев министерстви халех Патшалăх Думине чухăнлăх шайне хак памалли правилăсене улăштаракан саккун проектне тăратрĕ. Эпир çав шая Ĕçлев министерствисĕрех лайăх пĕлетпĕр. Çынсемпе ытларах калаçмалла, çакăн евĕрлĕ мĕн пур йышăнăвăн альтернатива пуррине кăтармалла.

Патшалăх Думинчи пирĕн çĕнелнĕ фракци тата КПРФ программине пурнăçламалли фронт умĕнче явапла тĕллевсем тăраççĕ. Саккăрмĕш суйлаври Думăра ĕçлекен 57 çынран 23-шĕ – çĕнĕ çынсем. Сакăр çын вăл е ку тапхăрта пирĕн фракци депутачĕсем пулнă, вĕсем таврăнчĕç. **15 çын, КПРФ фракцийĕн 30 яхăн проценчĕ – Патшалăх Думинче чăннипех те çĕнĕ сăнсем.** Вĕсем Андрей Алехин, Петр Аммосов, Иван Бабич, Евгений Бессонов, Анжелика Глазкова, Мария Дробот, Владимир Исаков, Георгий Камнев, Михаил Матвеев, Олег Михайлов, Артем Прокофьев, Мария Прусакова, Виктор Соболев, Ренат Сулейманов, Ирина Филатова. Ăнăçу сунар вĕсене!

Эпир мандатсене ӳстернине çеç мар, вăй-хăват хушнине те çирĕплетсех калама пулать. Фракци ĕçе пуçăнчĕ, комитетсене пайланă. Кĕçех бюджетăн пĕрремĕш вулавĕ иртĕ, **паллах, эпир капитализм бюджетне ырламастпăр. Анчах та иккĕмĕш вулав тĕлне тарăн тишкернĕ тӳрлетӳсем хатĕрлемелле.** Вĕсене çавăн пек хӳтĕлемелле, пирĕн суйлавçăсем хальхи сасăлавра мĕншĕн кĕрешнине тӳрех ăнланса илме пултарччăр. Хальхи вăхăтра çак çыхăнăва çухатма юрамасть. Кандидатсемшĕн тата партишĕн сасăланă аудиторипе ялан чĕрĕ хутшăнура пулмалла. **Депутатсен ĕç-хĕлне вăхăтра тата пур енлĕн çутатса тăрассине пысăк тимлĕх уйăрмалла.**

Çĕнĕ тĕллевсенчен пĕри – **«Çĕнĕ çынсен» чăн сăнне уçса парасси.** Вĕсем ăнăçлă реклама тата Якутск мэрĕн авторитечĕ çинче парламента пырса кĕчĕç. Анчах та çак парти Уйăх çинчен ӳкмен. Унăн пуçĕнче Пĕтĕм Раççейри Халăх фронтĕнчи чи пуян çын тăрать. Ыттисем влаçăн урăх общество проекчĕсемпе çыхăннă. Влаç партийĕн икĕ «самовыдвиженецĕ», Мускав мэрĕ ырланăскерсем, «Çĕнĕ çынсен» фракцине кĕчĕç. «Единороссем» тăванла пайларĕç. Кунта иллюзи çук.

Вĕсем пĕчĕк бизнеспа, налуксемпе, çамрăксен ыйтăвĕсемпе, экологипе çыхăннă темăсемпе вылясси халех паллă. Вĕсен аллисем ирĕклĕ, вĕсем нимĕн те татса памаççĕ, малтанхи вăхăтра аванах оппозицие евĕрлеме пултараççĕ. Вĕсене хăш-пĕр темăпа пуç пулма памалла мар. Пачах тепĕр майлă, хамăрăн сĕнӳсене йышăнтарттармалла е çук. Уйрăмах регионсен укçа-тенкĕ никĕсне çирĕплетессипе çыхăннă ыйтусене вĕсене памалла мар, унра вĕсем темĕнле ăнăçу паллине кураççĕ. Ку темăпа эпир тахçанах ĕçлетпĕр пулин те.

Пĕрремĕш пленарлă лару кунĕнче партин пичет кăларăмĕнче пирĕн фракци ертӳçин **«Главные требования времени: выход из тупика, устойчивое развитие»** программа материалĕ пичетленчĕ. Тарăн шухăшлă документ ĕçре пулăшма пултарать. Патшалăх Думинчи пирĕн фракцие çеç мар, пирĕн мĕнпур депутата. **Иртнĕ суйлав хыççăн вăл хăватлăрах пулса тăчĕ, пирĕн 2296 кандидат çĕнтерчĕ.** Паллах, цифрăсем «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕннипе» танлаштарсан нумай хут пĕчĕкрех. Анчах та ытти партисен пĕрле пухнă хисепĕнчен пысăкрах! Çакăнпа тухăçлăрах усă курар. Халĕ пирĕн çĕршывра тĕрлĕ шайри депутатсем 11 пин те 523 çын.

**Пиллĕкмĕшĕ. Таса суйлавшăн кĕрешесси.** Пĕлтерĕшлĕ самант: саккунсăр тĕслĕхсемшĕн явап тыттарасси. Хальхи вăхăтра судсенче тата право хуралĕн органĕсенче 356 çăхавпа заявлени выртать. Парти председателĕ вĕсене пурне те пăхса тухма хушу панă. Тĕп Комитет çумĕнчи юридици ушкăнĕ сăнасах тăрать, кирлĕ чухне ку ыйтăва татса пама пулăшать.

Электронлă сасăлав пирки калас тăк. **Пирĕн ăна пăрахăçлаттармалла.** Пирĕн специалистсем лайăх методика материалĕ хатĕрлерĕç, вĕсене регион уйрăмĕсене ярса парĕç. Кам та пулин пирĕн позицие çӳлти кабинетсенче хӳтĕлĕ, вырăнта та халăх шухăшне çирĕплетмелле. Ахăртнех, **Конституци судне те тухма тивет:** пĕр федераци суйлавĕнче икĕ тĕрлĕ меслетпе усă курни суйлавçăсен конституци пĕр танлăхĕн принципне пăсать.

Суйлав саккунне пĕтĕмĕшле улăштарас енĕпе тĕплĕ ĕçлемелле: эпир асăрханă çивĕч ыйтусемпе хатĕрленĕ сĕнӳсен пуххине кĕртмелле. **Хăшне-пĕрне КПРФăн ЦИКри членĕн Евгений Иванович Колюшинăн «ятарлă шухăшĕнче» юридици тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырса кăтартнă.**

Кунсăр пуçне коммунистсене йĕрлеме йĕркеленĕ шавлă кампанисене, «санкцилемен акцисене», минтингсене, экстремизмпа кĕрешессине, депутат статусĕ çинчен калакан саккунсене тимлĕх уйăрмала – право ĕç-хĕлĕн пирĕн куç умĕнче пулса иртекен шăйрăкĕсене шута илсе. Геннадий Андреевич **«Раççей Президенчĕ ячĕпе уçă çыру»** çырнă, унта пирĕн юлташсене йĕрленĕ тĕслĕхсемпе хушаматсене уççăн палăртнă. Кашниншĕн пĕрле кĕрешĕпĕр.

Çав вăхăтрах политика кирлĕхĕнчен тухса тăракан нормăсемпе усă курассине чармалли сĕнӳсене саккуна кĕртесси пирки те шухăшламалла. Парламентри оппозици партийĕ вăл – темĕнле радикаллă ушкăн мар. Унăн акцисем йĕркелес тĕлĕшпе хăйне евĕрлĕ гарантисем пулмалла. Тен, активистсене тата пирĕнпе пĕр шухăшлисене хӳтĕлеме **«Оппозици ĕçĕ-хĕлĕн право гарантийĕсем çинчен»** саккун патне çĕнĕрен таврăнма та тивĕ.

***Хисеплĕ юлташсем!***

Юлашки кунсенче информаци уçлăхĕнче кама мĕнле пост, кама мĕнле кабинет лекнине, çĕнĕ депутатсенчен пĕри хăйĕн жилечĕпех çӳрессине е çӳремессине питĕ шавлăн сӳтсе яваççĕ. Куракансене савăнтармалли сăмах пек янăрать. Калăн, эпир пĕр кунпа пурăнатпăр. Анчах та сăмах çĕршыв пуласлăхĕ пирки пырать. Ресурссемпе пĕлсе усă курнăран пирĕнтен анăçарахри Норвеги пулă тытакан ялтан ырлăх лидерĕ пулса тăчĕ. Раççейрен кăшт тухăçарах **Китай Компарти ертсе пынипе тĕнчери иккĕмĕш экономика пулса тăчĕ.**

Эпир Раççее вăйлă, витĕмлĕ, хăйĕн патшалăхĕн историйĕпе çеç мар, хăвачĕпе, çавăн пекех хальхи вăхăтра хăй мĕнле пурăннипе мăнаçланакан халăхлă пулнине курасшăн.

Суйлавра эпир сирĕнпе пĕрле процентсемпе мандатсемшĕн мар, КПРФ вăйне çирĕплетессишĕн кĕрешетпĕр. **Эпир патриотизм туйăмĕпе тачă çыхăннă тĕрĕслĕх иделĕсемшĕн кĕрешетпĕр.**

2021 çулхи суйлав кампанийĕ вĕçленчĕ çеç, тепри пуçланчĕ те: **пире шанакан çынсен шанăçне тӳрре кăларасси. Пирĕн вĕсен шанăçне тивĕçлĕ пулассишĕн хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тумалла!**

**КПРФ Тĕп Комитечĕн пресс-служби.**

ЧĂНЛĂХ
Учредитель – «Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ

Тĕп редактор Данилов Г. В.

Хаçата Çыхăну сфери, информаци технологийĕсем тата массăллă коммуникацисем енĕпе ĕçлекен федераллă службăн Чăваш Республикинчи управленийĕнче регистрациленĕ.

Регистраци свидетельстви ПИ №ТУ 21-00407, 2016 çулхи июлĕн 18-мĕшĕ

Хаçатра илсе кăтартнă фактсемпе пĕлтерӳсемшĕн авторсем явапла. Ал çырăвĕсемпе ытти материалсене регистрацилемеççĕ, авторсене тавăрса памаççĕ.

Материалсене илсе пичетленĕ чух пирĕн хаçат ятне асăнмалла.

Редакци тата издатель адресĕ: 428013, Шупашкар хули, Мир просп., 82 А çурт, тел.: 8(8352) 28-99-91 e-mail: kprfpress@bk.ru

Хаçата «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ. Адресĕ: Шупашкар хули, И.Я.Яковлев просп., 13-мĕш çурт.

Тираж 3000 экз. Заказ № 2103. Хаçат тӳлевсĕр саланать.